# «Нарспи» хăйĕн хакне çухатмĕ

**Георгий ФЕДОРОВ,**
**филологи докторĕ**

Чи малтанах çакна калам: эп каланă сăмах тĕрĕс, ыттисем калани тĕрĕс мар тес кăмăл çук. Шедеврсем пирки тĕрĕс, тĕрĕс мар тесе калаçни те — пач вырăнсăр япала вăл. «Нарспи» пек илемлĕ хайлав — татах темиçе ĕмĕр инçĕшне каяс культура тексчĕ. Ĕмĕрсен хутлăхĕнче хăй вăл чĕптĕм те улшăнмĕ, ăна хакласси вара вĕçĕмсĕр расналанса, пуянланса, çĕнелсе пырĕ. Генисен, генилле хайлавсен шăпи урăхла пулма та пултараймасть: содержанипе мĕн вăхăт иртнĕçем пуянланса пыма пӳрнĕ вĕсене. Авă: чи малтанхи тапхăрта Нарспин телейсĕр шăпи пăшăрхантарнă поэмăпа паллашакансене. Каярах çак поэзире пуянсемпе чухăнсен хирĕç тăрăвне асăрхакансем йышланнă. Унтан сарă хĕре халăх идеалĕ вырăнне курса пахаласси те пурччĕ. Паян акă çамрăк арăма кĕрт, юхха, çын вĕлерен текенсем тупăнчĕç... Ыран татах улшăнĕ лару-тăру. Анчах çак чаплă поэмăра фотографилле чăнлăх тупни, ăна поэтăн ачалла айкашăвĕ тени, ăна хамăрăн айванла чун-хакăл çӳллĕшĕнчен (лутралăхĕнчен тесен те юрамалла) хакласси нихçан та мал ĕмĕт картне лараймĕ. Чун çӳллĕшĕ те, ун лутралăхĕ те ăнсăртран килсе çакланмасть пирĕн хушша. Общество пурнăçĕ тĕпрен арканнă самантра (революци, вăрçă, перестройка...) унчченхи идеалсенче хура пăнчă шыракансем яланах чиксĕр хатарланса каяççĕ. Халĕ те пур çав урмăш туртăм — Яковлевра халăх тăшманне кураççĕ çав «ĕçченсем», Çеçпĕлте — çынсене персе пăрахса пуçтахланнă революционера, К.Ивановра — ачапчалла айкашăва, Иван Мучире — ĕмĕрне пĕртен-пĕр калав («Чышка тытăмĕ») çырса курнă журналиста... Нацилĕх пирки шухăшланин тӳнтерле палли вăл, çак япала, наци малашлăхĕпе витĕнсе ăна шанманлăха мала кăларса пынин палли. Вульгарлă социологин тепĕр авкаланчăкĕ урăхла каласан. Тӳррипе вара асăннă кашни художник шăпи пирки наци культурин анлă контекстне асра тытмасăр, халăхăн ĕмĕрхи философине шута хумасăр калаçма çук. Çавна шута илни ирĕксĕрех тарăн шухăша ӳкерет, пĕрме-пĕччен тĕл пулакан факт кун пек чух аваллăх тымарĕпе вăйланать, чылай пулăмпа пĕлтерĕшлĕ пĕр рете тăрать, хамăр çине урăхла пăхма хушать. Хайхискер, ăнсăртран кĕмсĕрт килсе лекнĕ вĕлтĕркке шухăша сĕвĕртме тивет.

Ака И.Юркинăн «Мул» повеçĕ: йĕкĕрешсем çуралсан ашшĕ-амăшĕн хăш ачи миçе çул пурăнма пултарасса пĕлесси килнĕ. Ик юплĕ сенĕк илсе кĕреççĕ, кашни ачин ятне пĕрер юп уйăраççĕ, вара ăна туртса çураççĕ. Чăнах, пĕр хĕрне кĕске ĕмĕр пӳрнĕ-мĕн, часах çĕре кĕрет вăл. Тепри чиксĕр вăрăм пурнăç пурăнать, темĕн тĕрлĕ чыссăрланса пĕтет, вилессе те «хурахсен аллинчен» вилет. Ку ăнланмалла — ун кун-çул йывăççине ашшĕсем хуçса амантнă. Илпекĕн «Хура çăкăрĕнче» те — ашшĕн муталанчăк кăмăлне пулах ун хĕрĕн, ытарми Селимен шăпи пӳкле вĕçленет. Юратман пуян услаппа пĕрле пуласран тарса шыва сиксе вилет вăл, савнă Тухтарсăр (чухăнсăр тейĕпĕр) пуçне ăна никам та кирлĕ мар. «Нарспире» те çав сывлăш — хĕрне «çукалла» пама килĕшмеççĕ Михетерпе карчăкĕ, ăна ирĕксĕрлени чапсăр ĕç пулнине тĕшмĕртеймеççĕ. Хушăлкаран тарса килнĕ хĕрне карчăк çĕрти-çӳлти хăвармн хăртса пĕтерет. Çĕрти-çӳлти тени ăнсăртран мар, Пĕлĕтпе Çĕр савăшăвĕ пуçланнă тапхăрта Нарспи те пĕве кĕрсе, пиçсе çитет. Анчах Хĕвелпе Шыв савăшăвĕ («Хĕвел тĕрĕ тĕрлесе Вылять унăн шыввĕпе») ют пулса тăрать çамрăксемшĕн, хĕрĕн амăшĕ çут çанталăк йĕркине пăсма çав тери хытă тăрăшать. Çурхи вăрану мар, ешĕл чечек илемĕ те мар, укçа, пуянлăх кирлĕ ăна. (Ас тăвăр-ха, «Шуйттан чуринче» те çав нушаччĕ шăллĕне вĕлерекен, пуян пулма шут хывнă пиччĕшĕн.) Ахальтен мар Хĕвел (кун-çул, халăх пурнăçĕн ĕмĕрхи палли вăл кунта) пур çут тĕнчене ӳсме, сарăлма хăват парать, Нарспи амăшĕ вара тăван хĕрне те пĕтме, типсе хăрма, çĕрме сунать. Михетер карчăкĕ çеçи? «Мулра» та ачисене пĕтме сунсах аркатаççĕ пурнăç йывăççине ватăсем. Ю.Скворцовăн «Юрăç Ваçça» калавĕ кăтартуллă: пулма пултарас савăшу çине шак хурса, каччă хĕре панулми (Библи символĕ) татса парать. Çав çимĕçе вара суптăркаса çитнĕ пĕр старик хăй валли (мĕн тума кирлĕ ăсран тайăлнă ватта савăшу улми?) упранăмĕн, çавăнпа ăна татса кайнă çамрăкăн пырĕ юнпа туласса ĕмĕтленет ăнăçсăр этем. Каллех тĕнче йĕрки-тирпейне маннă çын сăнарĕ умра, пурте вĕсем «тимĕр тылă» тытнă тейĕн алла, чĕрисенче вара усал-тĕсел йăва çавăрнă темелле ку çынсен. «Тимĕр тылă» тенĕрен... «Шалт-шалт тыллăм, шалт тыллăм, Çав кин **пуçне çи,** тыллăм», — вăрататать усала тухатмăш карчăк. Тăхтаман та... ырă çынах пулнă-ши вăл? Поэт хăй çапла курать ăна: «Лаптак сăмса, хĕсĕк куç, Сарă çӳçпе сар сухал; Лаши вĕçсе пырупа Пичĕ-куçĕ пит **усал**». Çурхи хĕвел каç еннелле сулăннă авăк ку. Усал вăйсем алхасас вăхăт çитсе пырать. Эппин, кăмăл мăкăлтанчăкĕ тахçанах пулнă пулĕ кĕрӳ пуласcин — «пысăк туй та **пăсăк туй**» кĕрӳшĕ-çке вăл! Ахальтен-им тухатмăш карчăк Тылла вĕслетнĕ пек сĕм вăрман та Тăхтамана Нарспи çинелле вĕслетет: «Тыт арăмна, Тăхтаман! Тыт арăмна, упăшка. Тарать усал арăму! Вăтăр та пĕр шуйттан пек Вăрман улать...»

«Епле вилнĕ Тăхтаман?» — пуç ватаççĕ хушăлкасем. Хуравĕ паллă — пӳкле, чыссăр вилнĕ. Ыррăн вилнисен масарĕ тивĕçмĕ те, тен, ăна, «пăсăк туйра» асăхнă этеме, арăмне йытă вырăнне хурса аçтахаланакан çынна. Çылăх çулĕ çине тăнă героя поэт ахальтен çеç асăрхаттармасть: «Хĕне, Тăхтаман... Чунне кăлар унăнне» (шуйттана памалăх-и тен?). «Анчах кайран хăвăннах ӳкĕнмелле ан пултăр...» Ĕнтĕ Михетер ирĕкĕ-айăпĕпе ун хĕрĕ те, кĕрӳшĕ те, ун карчăкĕ те, Сетнер те... **усал** çулĕ çине тăчĕç. Кăтăрса кайнă Усал вара хăй çулĕ çинче пĕр никама та картмасть: сарă хĕр-и вăл, «икĕ вăйлă алли пур» яшă-и («Нарспи»), «тути çӳхе чуп тума, алли çăмăл ĕç тума» Чĕкеç-и («Тимĕр тылă») — пурĕ пĕрех уншăн. Нарспийĕ çын вĕлерет, Сетнерĕ çавнах тума ĕмĕтленет, Чĕкеçĕ çĕр варринче (!) çула тухса каять. Элле... пĕлмен-и вăл çав авăкра шуйттансем алхаснине, чăвашсен арçурисем ахăрнă вăхăтри хăнана кĕртес йăла çуккине («Çĕрле çӳрес хăнам çук»)? Михетерĕн **шуйтанлăхне** те уççăнах палăртса пырать сăвăç: «урнă йытă Михетер», «ашшĕ йытă пулнă та», «йытă ури айĕнче Шатăртатать сĕм вăрман»; Нарспи пуçĕ «пĕтрĕ çамрăклах ашшĕ-амăш ухмахран»; «Атте-анне ирĕкĕ Çирĕ сарă хĕр пуçне» (ас илĕр-ха: «Çав кин пуçне çи...»). Нарспи тĕлĕкĕнче вăрмана пырса кĕнĕ Михетер пур усал-

тӗселе вӑратрӗ, **вӑрман шуйттан пек** ула пуҫларӗ. Унччен-и-ха, Нарспипе савнине вӑл «Чипер кайӑр» тесе ӑсататчӗ. «Арҫурире» те ҫавах мар-и? Шӑпах усал вӑраннӑ самантра пырса кӗрет вӑрмана Хӗветӗр. Тен, Тӑхтаманӑн пулас шӑпи те курӑнать пулӗ ҫакӑнта, вӑрманта асӑхса ҫӳрес шӑпа. Ахаль мар вӑрман сӑнарӗ тӑтӑш йӗрлӗ кунта: ҫурхи кун вут-хӗмлӗн курӑнас, кӗрӳ сӑнне «пит усаллӑн» кӑтартас умӗн вӑрман «Темӗншӗн пит янӑрать». Кайран кӗпӗр-кӗпӗр сиктерсе пуринчен малтан Тӑхтаман «килсе тухать»... Ак тата поэма вӗҫӗ: «Килсе тухрӗҫ вӑрмантан... икӗ урапа». Малалла мӗн пулнине пурте пӗлетпӗр: «Михетере вӗлернӗ..., Пӗтнӗ мӗскӗн Сетнер те...» Нарспи Турӑпа калаҫнине те ӑнланма пулать: «Мӗншӗн мана **чун** патӑн?» Ҫав чуна ашшӗпе амӑшӗ тата упӑшки кӑларса илеҫҫӗ унӑнне. Ку тӗнчере чунлӑн пурӑнмалӑх вырӑн ҫук Нарспишӗн.

К.Иванов тӗллевне пач шута хумасан, ӗҫ-пуҫа ҫиелтен кӑна хаклама «вӑй хурсан», наци культурин паян та чӗрӗ тымарӗсене ас тумасан ҫапла та шутлама пулать: Михетер ачине ырӑ тӑвасшӑн пулнӑ, кайран упӑшкипе ҫураҫасса ӗненнӗ. Амӑшӗн те кӳренмелӗх сӑлтавӗ пур темелле вӑл енне кайсан, хӗрӗн те, каччин те, Сетнерӗн те... Кӳренӳ поэми ҫырса хунӑ тейӗн поэтӑмӑр. Паллах, вулакан паллӑ ӑста ҫырнине тӗпе хурса тем шухӑш та ҫавӑрма пултарать, ӑна ку тӗлӗшрен чараканӗ те пулмӗ. Анчах Иванов кунпа хӑш енчен ҫыхӑнма пултарӗ-ши? Вулаканӑн апла та, капла та улшӑнса пыракан кӑмӑлне мар, хӑй чунӗнчи сисӗм-туйӑма мала хунӑ-тӑр поэт никампа пӑтрашми сӑн-сӑпат хывнӑ чух. Ҫын тӗнчине мар, хӑй тӗнчине хывнӑ вӑл. Ахальтен-и ав Пушкин каланӑ: поэта хӑй хывнӑ тӗнче саккунӗсемпе кӑна хаклама май пур. Эпир вара хамӑра мала хурасшӑн, хамӑр ӑнланӑва классик ӑнланӑвӗ вырӑнне картасшӑн.

Паллах, кӳренӳ проблеми те пур пулӗ-ха поэмӑра. Ашшӗ ӳпкелешет-тӗр: ашшӗ-амӑшӗ тӑрӑшнине вырӑна хуман пулать савнӑ ачи. Анчах «амӑшне пӑх та хӗрне ил» тенине асра тытас-тӑк, Нарспи чурӑс кӑмӑллӑ, хура ӑшлӑ пулассине шанмаллаччӗ-и ак? Туй-ҫуй пуҫланиччченех амӑшӗ ун пӗр сӑлтавсӑрах йӳҫсе ҫӳрет, хӑй вара ял ҫинче пӗрех ырӑ сӑпатлӑн курӑнма капашать, ялйышне вашават кӑмӑлпа туя чӗнсе ҫаврӑнать. Ҫапла пурӑнаҫҫӗ Михетерсем — килте пӗр сӑн вӗсен, ял ҫинче — тепре. «Ыр ҫын вилсен ят юлать», — тетчӗ «Арҫурири» Хӗветӗр. Ырӑ ят юлӗ-ши Михетер вилсен? Юлмасси паллах, поэмӑри ӗҫ-пуҫ ҫакна аван кӑтартать. Апла-тӑк ырӑ ҫын теме те тӑхтамалла пулӗ Михетере. Патриархаллӑ ял йӗрки-шывне Михетерпе карчӑкӗ шалтан туйса илеймен, хӑйсен сипет никӗсӗ тӑвайман. Ял ҫинче пӗр сӑпатлӑ курӑнса, ӑшра тепӗр шут хывассиех малта пулнӑ вӗсен: мулшӑн антӑхаканӑн урӑхла пурӑнма майӗ те ҫук тесшӗн вӗсен сӑнарӗсене калӑплакан Иванов. Тата тепӗр ен: Михетертен пуҫласа поэма тӑршшӗне пилӗк виле тӑтӑшланса каять. Хӑй вӑл арӑмӗпе танлаштарсан вашаватрах пек курӑнать, карчӑкӗ вара хӑвӑртах вӗҫерӗнет: тӑван хӗрне, пурнӑҫ пурӑнас (!) ҫамрӑка вилӗм сунма тытӑнать. Ку ӗнтӗ — хӑйне хӑй вилӗм сунни те; хӑйне вӑратнӑ Усал вӑратаканне те шеллесе тӑмасть. Апла пулсан, «пирӗн йӑх пӗттӗр», «тӗтӗм сӳнтӗр» тесе хӑй ҫине хӑй ылхан йыхӑрать Михетерӗн карчӑкӗ. Хӑрушӑ ылхан ку, ял ҫинче ҫичӗ сыпӑк тӑршшӗне ахрӑмланса каякан чыссӑрлӑх. Хӑйӗн ырӑ ятне кӑна мар, хӑй тӑсӑмӗн ятне те ҫӗртес кӑмӑл вӗриленет карчӑк ӑшӗнче. Паллах, кун пек ҫыннӑн ашшӗ-амӑшӗ пулма тивӗҫ те ҫук, Михетерсен чӗлхипе кунта усал-тӗсел калаҫать. Ку вара — поэма никӗсне хывнӑ ытарлӑх палли, ӑна фотографилле чӑнлӑх картне антарса, хамӑрла, килтилле ӑнлантарни — ӑнӑҫсӑр ӗҫ. Тӑванлӑх «чӗрине» мӗн аркатни паллӑ аслӑ сӑвӑҫшӑн — мул. «Шуйттан чуринче» ку ыйтӑва тата тепре хускатать вӑл, унта та укҫашӑн чунне сутнӑ этем тӑван шӑллӗне вӗлерет. Ӑна та, Михетере те, тимӗр тылла алхастаракан карчӑка та усал явӑҫнӑ. Ку мӗнле пулса иртнине те ас тутарсах хӑварать художник: карчӑк куҫне сӳс тылланӑ чух кантӑр шӑмми лекнӗ, шӑллӗне вӗлерекен пилсӗр ҫын ана чиккине (шуйттан ҫӳрекен ҫул ҫине) выртнӑ, Михетер пуҫне ҫын умӗнче пуринчен малта пулас шухӑш ҫавӑрса янӑ. «Ӗнтӗ паян юлашки Ӗҫӗм пултӑр хӗрӗме», — тет вӑл туй кӳмипе тӑрмашнӑ чух. Юлашки ӗҫех! —качча парсан пӗрре те кайса курмасть вӑл ҫамрӑксене. Кун сӑлтавне «мӗн кӗҫӗнрен ӳстернӗ» хӗрӗ пит аван ӑнкарса илнӗ: «Ӳстертӗр те укҫашӑн Сутса ярса пӗтертӗр». Хайхискерӗ, амӑшӗн мар, Нарспин ылханмалламччӗ амӑшне...

Илемлӗ хайлава социологи виҫипе, вульгарлӑ шкалапа виҫиччен наци культурине тарӑнраха кӗрсе тӗпчемелле терӗмӗр. Куна тепӗр тӗслӗх те уҫҫӑн кӑтартать. Туй сӑнарех хӑть. Мӗнле туй вӑл, Нарспипе Сетнер ятне лартнӑскер? — **«Пӑсӑк туй»** тет Иванов. Сӑлтавӗсенчен пӗри — ашшӗ-амӑшӗн икӗ питлӗхӗ. Йӗри-тавралли тӗнчен чунсӑрлӑхӗ те туй пӑсӑкнех палӑртать: ӗҫме-ҫиме пынисем «шеп те пулӗ туй» тесе «вӑйран тухса сикеҫҫӗ», сарӑ хӗрӗн нушине «пӗртте вӗсем пӗлмеҫҫӗ». Туя пӑсас тесе ашшӗ те хытӑ тӑрмашать — вӑл мар-и-ха сӗм вӑрмана шуйхантарса, аркатса хӑвараканни. Усал ӗҫ ахрӑмланса каяс техӗм хываканни? Халӗ вӑл туйра арӑш-пирӗш сиксе ташлать. «Акӑ ӗнтӗ, пӑх ӗнтӗ, Епле ташлать ват хуҫа», — йӗплет поэт «Арҫурирен» тӳррӗнех илнӗ йӗркепе. («Акӑ ӗнтӗ, пӑх ӗнтӗ... Сикрӗ тухрӗ ҫырмаран, Пӗкке хуҫрӗ ҫурмаран».) М.Федоров витӗмне хӑй ҫинче питӗ вӑйла туйнӑ Иванов Михетер арҫури ташшине ҫаптарнине систермест-и тен? Каланӑччӗ вӗт Сетнер: «Кӗлрен вутӑ тӑвас ҫук». Ял пуянӗ вара, чысне ярса, ял-йышӗпе кавар тӑвать: пулнӑ ӗҫ ҫинчен «ҫӗн кӗрӗве калар мар», «шепрех туй тӑвар»! Михетер хӑтланкаларӑшӗсенче ҫапла усалран усал сыпӑнса пырать, вӑл лартакан туй та — **арҫури туйӗ**. Хӑй вилӗмне сиссе аҫтахаланать Нарспи ашшӗ, ачин вилӗмӗ умӗнчи туйра сикет. Кунашкал ӗҫ-пуҫ «Нарспире» кӑна-и вара? «Ялтари» (Ф.Павлов) туя та «юнлӑ» туй темелле. П.Осиповӑн «Айтарӗнчи» туй та ҫав сӑпатлӑ. Хв.Акиверӗн «Туй» повеҫӗнчи ҫакнашкал уяв вара пӳкле вилнисен масарӗ ҫинче асӑхать.

Е **виле** проблемине илер-и? Ӑнсӑртран мар туй сӑнарӗсем пӳкле вилӗмпе ҫыхӑнни. «Нарспирех» пилӗк виле терӗмӗр, «Тимӗр тылӑра» — иккӗ, «Хура ҫӑкӑрта» — иккӗ, Акиверӗн «Туйӗнче» — тӑваттӑ... Ҫак лару-тӑрусенчен пӗри те вилӗмсӗр вӗҫленмест. Вӑрттӑнӗ ҫакӑ-тӑр — пӗр кӑтӑрса кайнӑ усала нимӗнпе те чарма май ҫук: кӑтӑрса кайнӑ тылӑ армансене, аслӑксене аркатать, тухатмӑша хӑйне те вилӗм «пӳрет». Шерккей те шар курать — арӑмӗпе хӗрӗ вилеҫҫӗ, ҫурчӗ ҫунса каять, ывӑлӗ ҫула тухса каять. Ҫав сывлӑш хавалӗ «Нарспире» те вӑй илет: Михетерпе карчӑкӗ усала вӑратнӑ, апла-тӑк вӗсене хур тивӗҫмеллех. Тӑхтамана та масарта сӑваплӑ вырӑн лекес ҫук. Пӑхса тӑрӗ-ши ял-йыш ун тӑприне Нарспи тӑприне пӑхса тӑнӑ пек? Иванов ӑна шантарса каламасть, текст тӑршшӗпех ҫӗн кӗрӗве питлесе, тӑрӑхласа хакласа пырать. Эппин, манӑҫас шӑпа та тивӗҫме пултарӗ, тен, Тӑхтамана, пӗрлӗхсӗр (ача-пӑчасӑр) пулса тӗтӗм сӳнтерес кунҫул. Ытарлӑн ҫавӑрса каласан, сар хӗрӗн пулас упӑшки хӑй валли хӑй шӑтӑк алтать. Акиверӗн «Хуттӑр Хӗли-

мунĕнчи» герой иртнине аса илет, тахçан пытарнă япаласене çĕр айĕнчен чавса кăларать. Ку вăл уншăн — чыссăр, пӳкле вилĕм шăтăкĕ. Д.Гордеевăн «Шăрçа пуçлă çăпата» повеçĕнчи ашшĕ те ывăлне виле шăтăкĕ чавса тăранма вырнаçтарать, хăй те çав ĕçпе аппаланнă вăл. Эппин, иккĕшĕ те вĕсем масара лекеймес шăпа хатĕрлеççĕ хăйсем валли. Тăпра, шăтăк тенисем чăваш литературишĕн ăнсăртран сăнарсем мар, ĕмĕрхи категорисем вĕсем. Прозăпа поэзире, драмăра çак сăнарсем урлă писатель-поэтсем чыслă ят, сум проблемине çĕклеççĕ, чун таси пирки сăмах пуçараççĕ. **Шăпа, кун-çул** ăнлавсем чăвашсемшĕн ырă ятпа, чун тасипе çыхăннă-мĕн, анчах вĕсене чăвашсем яланах халăхăн ĕмĕрхи ĕненĕвĕ, наци философийĕ урлă ăнланса пынă.

Каллех «Нарспи» патне таврăнар. Тăхтаман вилнĕ хыççăн тапранса каять-шим унти тӳнтерлĕх таппи? Вăл вилессе сиссе, ăна вĕлерме тĕв туса хастарланнинчен çеç тытăнать-ши пӳкле кун-çулăн ӳсĕмленсех пыракан синкерĕ? Çук-тăр. Нихçан та кун-çул еккине алла илес, ăна çĕнтерес ĕмĕт пулман чăвашăн, çурасас йăла ытларах пăшăрхантарнă ăна. Ивановшăн ку пушшех те кăтартуллă. Çак тĕлĕшрен «Юмăç патĕнче» сыпăка пролог картне лартма пулать пулĕ, ватă çын каланă сăмахсем пур героя тивĕçеççĕ теме пулать: «Чĕри татăк — сыпăнмĕ», «Çамки шăтăк — хупăнмĕ», «Шăнса кайĕ вĕри юн»... Мĕншĕн çапла пулнă-ши ку? Акă мĕншĕн пулĕ — вилĕмрен хăраман чăваш çынни, чыссăр вилсе ята ярасси шиклентернĕ ăна нимрен ытла, ял çинче ырă мар ят хăварасси хăратнă. Ав, «Арçурири» Хĕветĕр — сăвапсăр вилнĕ, вилсен те ырă вырăн тупайман Энтри арçури пулса тухать ун умне, пӳкле вилсен мĕн пулма пултарассине систерет: «кам хĕрхенĕ ачама», «хуньăм хĕрĕ — хура хĕр Хурлăх курма вăл юлать». Куна ăнланмалла: сарăмсăр вилнисене ыр масара кĕртмен, ятне çăва туса панă. Нарспие те хăй çакăннă вырăнах чавса чикеççĕ, анчах силписен ăна усалпа асăнасси çук, тăприне пăхсах тăраççĕ, «ялан, çумăр çумасан» шыв сапаççĕ — ан çурăлтăр, чысне ярса, ирĕке тухса намăс курса ан çӳретĕр теççĕ-тĕр. Хв. Уярăн «Таркăнĕнчех» урăхла сăн — çĕр типсе кушăрхать те ун хушăкĕсенчен тухнă вилесем (пӳклисем) çĕр çинче нĕртен кайса çӳреççĕ, çумăр пĕлĕчĕсене хăратаççĕ. Çавăнпа вĕсен кăкри çине (ан тухчăр тесе) шалча çапать ял-йыш. Халиччен калани-туни хăех çапла шухăш патне çитерет — таса ят, ята ан çĕрт, атте-анне ячĕ тени чăвашшăн çăвар вылятни пулман. Ватăсем те ав çамрăксене çапла ыр суннă: «Турă ыр вырăн патăр сана». Ку ĕнтĕ вăл «ыр çын пулса ыр вилĕмпе вил», «кушак çури мар тесе тирпейлесе пытарĕç» тениех. Ку та — ялăн ĕмĕрхи йĕрки: йышпа, ялпа пĕрле пурăнмалла пулнă чăвашăн, «йышран юличчен муртан юл» тесе вĕрентнĕ çамрăксене. Михетерпе карчăкĕ вара хăйсене кăна вырăна хурас тунă, ял йăлине пăрахăçлас, унран иртсе каяс ĕмĕтпе хавхаланнă. Турă та чăваш çыннине çав пĕрлĕхшĕн чун панă. Нарспире, ав, Турă панă чунпа ашшĕ-амăш суннă кун хирĕç тăрăва кĕреççĕ. «Эй, турăçăм-пӳлĕхçĕм, Мĕншĕн мана чун патăн?» — асапланать пурнăçĕ вĕçне çитнĕ çамрăк арăм.

Акă: этем çĕр çине пурăнма çуралать, анчах чунлăн, чыслăн пурăнма вырăн тупаймасть. Леш тĕнчере те сăвап тупаяс çук Нарспи (Пинерпи, Елюк, Селиме...), ăна ĕмĕр канмалăх масар вырăнĕ те паман шăпа. Çак енпе Ю.Зайцевăн картинине асăнма кăсăк: упăшкине вĕлернĕ хыççăн тăр-пĕччен юлать хĕрарăм. Хыçалта кĕç усала çаврăнса вăрман тăрăх чупас упăшки выртать, сĕтел-пукан чуна çӳçентерет, малта, çурма уçă алăкра ум тĕнче вутлăнкăварлăн алхасать. Умĕ те (ку тĕнче), хыçĕ те (леш тĕнче) ют халь геройшăн, вилĕ вăл тек. Вăрман та тискер, шуйттан алхасать унта: «Армак-чармак йывăççем Пуçĕсене сулаççĕ... Çулне пӳлсе тăраççĕ... Ват йывăççем хушшинче Арçурисем выляççĕ... Аллисене тăсаççĕ». Каламасăрах паллă — Арçури Хĕветĕре хăваласа чупнипе пĕр пек сцена ку. Кунта та М.Федоров витĕмĕ хытах сисĕнет, икĕ хайлавĕнче те арçурисем пĕр пек сăпат тупаççĕ; вăрман ахăрни те икĕ ăстан чылай енпе тĕл килет...

Нарспие çăмăлçах хĕр, юхха тесе пахаламалли условисем çук та иккен поэмăра. Содержанийĕ ун — тĕпрен философиллĕ, тарăн шухăшлă; ытахаль вак-шак, ансат публицистика, килти пурнăç, хамăр чун лутралăхĕ енчен çеç хаклама питĕ хĕн ăна. Çитменнине, поэмăра палăрнă коллизи вуншар чăваш ăстин хайлавĕнче кăна мар, тухăç халăхĕсен вуншар литературинче те палăрнă (тутар, пушкăрт, узбек, иран, перс...), çав культурăсенчен вăл анăçа (Англие) куçнă, Ромеопа Джульетта сюжечĕ пулса кунта таврăннă. Историре тĕрлĕ сăпатлăн аталаннă вăл, çав сюжет, тĕрлĕ хайлавсенче сăнланнă. И.Петрован «Телей çулĕ» драми те, сăмахран, çав никĕс çинчех хывăннă. «Ку сюжетăн историйĕ, — тет В.Родионов тĕпчевçĕ, — хăйĕнче 700 çул патнелле тапхăра ытамлать». Ун çапла турачĕсем хывăннă: 1) чăваш хĕрне ют çĕршыва качча параççĕ; 2) чăваш хĕрне савнă (чухăн) çыннинчен уйăрса кăмăл туртман пуяна качча параççĕ... Паллах, çак йĕрсен туратланăвне пĕр енлĕ кăна мар, нумай туратлăн тĕпчесе пĕлмелле, вара каланă сăмах та ĕненмелле пулĕ, хăйĕн çиелтенлĕхĕпе куçа тăрăнмĕ. Çич-сакăр ĕмĕр хушши илентернĕ сюжет кашни писателĕн ачапчалăхне (Егорова каланă пек), хăй шăпин «фотографилĕхне» çеç палăртать, паянхи чăвашăн пурнăçĕпе тĕл килмест тесе çирĕплетни кăмăла тивĕçтермест. Идеал тени те... Сĕмленнĕ-ши К.Иванов çĕршер çулсем пĕр сăпатлă пулмалли идеал тупса парăп тесе? Çук-тăр, унашкалах айван пулман пулĕ пысăк поэт. Идеал тени те пĕр вырăнта тăмасса, «Нарспи» поэмăна вулакан кашни çĕнĕ ăру çав идеала поэмăн тĕрлĕ енĕсенче тупасса ĕненнĕ-тĕр вăл. Ĕненменех пултăр-и эппин? Пулин! Хальхи пурнăç ыйтăвĕсене Иванов шалтти татса парасса кĕтсе ларăпăр-и эппин? Хамăр вăя пĕрре те шанмăпăр-и? Кун пек туни ытла та кичем пулĕччĕ.

Юлашкинчен пĕр-ик сăмах учительсене каласа хăварас килет. Хамăн статьяра «Нарспи» поэмăна халăх философийĕ, шухăшлавĕ тĕлĕшĕнчен хакларăм. Литературоведени, литература теорийĕ кашни хайлавах (вăл шутра «Нарспие» те) тĕрлĕ енчен тишкерме, хак пама пултарать (типологипе сюжет йĕркеленĕвĕ, поэтика тытăмĕ тата ыт. те). Пĕр япалана çеç асра тытас пулать — тишкерӳ наука шайĕнче пултăр, сăмах вылятни, мода хыççăн кайса ĕлĕк ырă, лайăх пулнă сăнарсене халĕ усаллисен, сивлеккисен йышне кĕртсе хуни ан пултăр. Дилетантла хайлавсем, пули-пулми авторсем хыççăн кайса ачасен пуçне минретме кирлĕ мар. Паллах, ку шкулта, класра тĕрлĕ шухăшлăх пулмалла мар, учитель каланă шухăш çеç тĕрĕс тенине пĕлтермест. Тавлашу та кирлĕ класра, ачасем хăйсен шухăшĕсене пĕр-пĕрне пĕлтерччĕр, хирĕçлеччĕр юлташĕсене. Ку — паянхи вĕренӳ ĕçĕн палли. Анчах та çакна асра тытмалла: пурнăç çĕр тĕрлĕ çаврăнсан та, çут Хĕвел айĕнче, çĕр çинче яланхи, хăйсен хакне çухатман ăнлавсем, пулăмсем, япаласем пур. Тĕнче литературин ылтăн фондне кĕнĕ «Нарспи» поэма — çав шутра.

**«Халăх шкулĕ», 1998, 1№, 57-61 с.с.**